„КАНАШ“ хаçат çумĕнче тухаҭ.

# КАПКĂН

1-мĕш №

## КИНЕМАТОКРĂХ.

Кам кинематокрăха кĕрсе курман, кам кинематокрăх, тенĕ са аха та илтмен—килĕр ман пата, чупăрваскасах.

Пурне те кăтартăп, пурне те ăнлантарса парăп.

Ларăр çакăнта. Есĕ, Куçма Иванчă, çакăнта лар. Есĕ, хура сухал, кунта. Сарă сухал çакăнта. Е, есĕ те килнĕ иккен, шăлсăр асанне. Лар, лар çакăнта...

Тытăнатăп. Пуçлатăп. Хăлхăрсене лайăхрах тăратăр.

Кинематокрăх—вăл чĕрĕ карттинсем. Акă есĕр кунта мĕнле ларатăр, тăратăр—кинематокрăхра та çавах. Кинематокрăхра та пурнăçри йапаласене кăтартаççĕ.

Тытăнатăп. Пуçлатăп. Куçăрсене алăсемпе ан хуплăр.

**Акă пĕр карттин:** Йăлăм-кас вулăсĕ, Шупашкар уйесĕ. Тĕттĕм, сĕм тĕттĕм вулăс. Виçĕ утăмра, уйăх çутатнă чухне те хăвăн йулташна курас çук. Вулăсра пĕр çутă анчах, вуламалли çурт, вăл та сӳнсе ларасшăн. Хăй сӳнмечĕ ун çине вулĕçтăвком претçетаттĕлĕ вĕрет, сураҭ—сӳнтересшĕн тапаланаҭ. Ку çитместха, претçетаттĕл вулăсри йалсене „Канаш“ хаçата памасҭ. Сире ухмахсене кирлĕ мар, тет, унта тĕрĕс çырмаççĕ, тет. Унта „Хĕрлĕ хĕм“ пек шереметсем çыраççĕ те çавна укçа парса ил вара тет. Мĕскĕн, кӳренет «Канаша». Çак вулăсрах кореспотентсен пуçĕсене çĕмĕрчĕç. Мĕнле, хаçата хирĕç пырса, Йăлăм-кас вулĕçтăвком претçетаттĕлĕ кореспотентсене хĕсĕрлеме пулăшмасҭши? Антонов ĕçĕ мĕнлеши?

**Иккĕмĕш карттин:** Патĕрйел уйесĕ, Виçпӳрт Шăмăршă йалĕ. Ху-у сăмакон шăрши сăмсана çапаҭ, сывлама та çук! Шерип пиче, сăмакон йухтаратăни? Çук, тĕсне те курман, йухтарма та пĕлместĕп... Хăй кашни кас мунчара—кап-кап-кап, тутарса ларат... Селĕмйан пиче есĕ те сăмакон йухтармастăн пулĕ?

Мĕн кирлĕ-мара калаçатăн. Никăçан та йухтарман... Тан, тан, тан!.. Чан çапаççĕ. Халăх кĕрлет, ачасем çухăраççĕ. Мĕн пулнă? Шериппе Селĕмйан çунаççĕ!.. Мĕнтен? Çав сăмакон йухтарнипех тивсе кайнă, теççĕ. Ак сана кап-кап-кап! Ак сана сăмокон! Чавси çывăх та—çыртма çук...

**Виççĕмĕш карттин.** Пăхăр лайăхрах. Пит лайăх карттин. «Чаплă» Турай вулăсĕ, Йетĕрне уйесĕ. «Чаплă» Николайĕвсене Турай чухăнĕ вырăнĕсен чен шăпăрпа шăлаҭ. Ха-ха-ха! Пĕри йĕмне çухатса тараҭ, тепĕри, вăрăмми—хĕçне, хĕçне мар, портхвĕлне пăрахса анкарти хыçнелле чупаҭ, виççĕмĕшĕ електритсă шăнкăравĕсемпе чанкăртаттараҭ. Ех чăваш пролеттарийĕ! Лайăхрах тасаҭ харам пырсене...

**Иулашки карттин.** Аттай вулăсĕ, Йетĕрне уйесĕ. Ну вара ку кулăшла! Ахăлгатса кулсах вилмелле. Тракушкинă йалĕ. Хăйсем выçă пулсан та, хресченсем çĕнĕ чиркӳ тунă. Çитменнине кунта йалсовет претçетаттĕлĕ чиркӳ канашĕн пуçлăхĕ! Пĕр сăмахпа, Аттай вулăсĕнче - çĕр çинчи рай. Претçетаттĕлĕ, претçетаттĕлĕ мĕнле? Ха-ха-ха! ăçташи кун ваҫҫи шăпăр?

Ну, пайана çитĕ, хаклă йулташсем. Тепĕр чух, вăхăт пур чух, тата кăтартăп. Сывă пулăр!

Хура Ура.

# Турă саккунĕпе.

Ку ĕç Чăваш оплăçĕнчи Ухмах йатлă йалта пулнă. Акакки пуп чиркӳре хресченсене йатлаççа калавă:

— Хуйхă сире, уçал ĕçсем тăвакансем! Çĕнĕ пурнăçпа пурăнма шухăшланăшăн—шкулшăн, нумай пусăллă уйшăн, çĕрĕçлемелли машшинсем туйанасшăн тăрăшнăшăн—сире турă хăвачĕ пĕтерсех лартĕ, тенĕ.

— Апла пулсан мĕнле пурнăçпа пурнас?—тесе ыйтнă Упрам йатлă ват старик.

— Турă хушнă пек пурнăр. Пиплире, йеванкĕлире мĕн-мĕн çырнисене асра тытса пурнăр.

— Хресченсем шухăша кайнă. Нимĕн тума пĕлмесĕр пуçĕсене кăтăрткатăрт хыçса илнĕ те:

— Йурĕ. Ес каланă пек пултăр, пуп мучи, турă çырăвĕ тăрăх пурăнма пуçлăпăр, тенĕ.

Çав кунах хресченсем турă кĕнекисене вĕренме пуçланă... Тепĕр кунне, Вавилонти çӳлĕ пашнĕна тунă чухнехи пекех, йалти çынсем харкашма тапратнă. Тăхтаман мучи ĕçсе ӳсĕрлнĕ те, çаппа çарамас хăвăнса урам варрине сарăлса выртнă.

— Мĕн намăсланса выртан мучи?—тесе ыйтнă увран вулăсри милитсионер.—Пăртак намăса пĕлес пулаť.

— Турă çырăвĕнче çырнă пек тăватăп,—тенĕ Тăхтаман мучи—Сăваплă Ной йевĕрлĕ пулас тетĕп, Ной вăкăр пекех нумай ĕçнĕ, ĕçсе ӳсĕрлсен çаппа çарамас выртса çывăрнă. Епĕ те сăваплă çынсем пек пурнатăп. Мана ĕнтĕ шуйтан илĕртеймĕ.

Тепĕр минутран Кăтра Вађан ачин ачисем хăранипе чупса çитнĕ.

— Пирĕн аслатте темĕскер ухмаха йернĕ, те ухмах курăкĕ çинĕ. Тислĕк çисе тăранчĕ те, йăвăç тăрне хăпарса ларчĕ.

Кăтра Вађана йăвăç çинчен тытса антарсан, çиленсе кайнă, пуринпе те вăрçаť, кăшкăраť:

— Йарăр! Йованкĕлире каланă пек пурăнатăп епĕ. «Çӳлти вĕçен кайăксем акмаççĕ те, вырмаççĕ те, вĕсене сирĕн çӳлти аçăр тăрантараť»... Çӳлти вĕçен кайăксем пек пулас тетĕп епĕ.

Петĕркки Кирили арăмĕ уласа йĕрсе чупса пынă:

— Пулăшăр. Упăшкам мана Мăнтăр Ваçли кулакпа çывăрма йараť!

— Пиплире каланă пек тăватăп!—тет Кирила.—Сăваплă Авраам пек тăвасшăн епĕ. Вăл манран çветтуйрах (тасарах) çын, çаплах та вăл хăйĕн арăмне—Саррăна Авимелех йатлă патшапа çывăрма йанă. Уншăн Авимелех патша Авраама нумай выђăхсем, ылтăн, кĕмĕл панă. Турă çынни, çветтуй çапла хăтланаť пулсан, манăн та ун пек тăвас пулаť.

Унчен те пулмасť Ваçка комсомолĕс хашкаса чупса кĕнĕ те каланă:

— Ăвран кайрăм, йалта темĕн те пĕр тăваççĕ. Куçма Çимукĕ кĕтӳре пурнакан Сухан Петĕрне ĕмĕрлĕх чура туса хунă.

Куçма Çимукне топроса чĕнтернĕ. Вăл топроса хулăм пипли илсе пырса каланă:

Турă саккунĕпе пурнатăп. Турă хăйех чурасене укçа парса илме хушнă. Акă: «хăна вађђи арçын чурасемпе хĕрарăм чурасем туйан. Вĕсене, ху вилсен, хăвăн ачусене парса хăварма пултаратăн. Вĕсене ĕмĕрлĕхе чура туса хуна пăхăнтарса пурăн! Мĕн тейĕр ĕнтĕ? Чĕлхӳсене çыртрăри? Сухан Петĕрĕн хуçайстви çук, çавăнпа епĕ ăна ĕмĕрлĕхе чура тăвас, тетĕп.

3 арăм сасартăк хăрушăн кăшкăрса йанă:

— Кравул! Хурах! Вĕлереççĕ. Виçĕ упăшка йалсовет умне пырса тăнă.

— Мĕншĕн арăмсене хĕртетĕр.

— Турă саккунĕнче çапла тума хушнă, тенĕ вĕсем.—Унта каланă: арăмсен упăшкисенчен хăраса тăчăр, тенĕ. Пирĕн арăмсем пиртен хăрамаççĕ. Тепĕр çĕрте тата çапла çырнă: хĕрарăм вăл шайттан чӳлмекĕ, „тамăк хапхи", тенĕ. Етем ăрăвĕ те хĕрарăм хырăмне чараймасăр улма çпнĕрен асап курса пурнаť, тенĕ. Мĕншĕн хĕнес мар вара хĕрарăмсене?

Унчен те пулмасť Упанкка хĕрĕ Сăпани пичĕсене тутăрпа хупласа йĕрсе пынă:

— Манăн атте ухмаха йерсе кайнă. Хăйĕнпе вăйпах мана çывăрттарасшăн, тет.

Упанккана топроса илсе пырсан каланă.

— Пиплире каланă пек пурăнатăп. Унта сăваплă Лот икĕ хĕрĕпе çывăр-

нӑ. Лотпа унӑн хӗрӗсенчен 2 ывӑл ача ҫуралнӑ... Лот—ҫветтуй ҫын. Унӑн сӑнӗ Ишек чиркӳнче те чи ҫӳлте ҫакӑнса тӑрать. Ҫветтуйсем пек пурӑнмасан, пире ҫылӑх пулать, тенӗ...

Виҫӗ кун хушшинче ҫавӑн пек ирсӗр ӗҫсем пит нумай пулса иртнӗ. Вара хресченсем шухӑшласа илнӗ те, ҫапла каланӑ:

— Ну, ку турӑ саккунӗпе турӑ ҫырӑвӗнчи пек пурӑнсан выҫӑхран та ирсӗртерех пулса кайас пулатӗҫ! Капла, турӑ саккунӗпе пурӑнма пӑрахас пулать, тенӗ.



Пох ослов.

# Йӑван мучи вӑлтине ҫакланнисем.

Сыви, йулташсем!

Епӗ пайан каллех хам вӑлтама йарса пӑхамха йалалла. Каллех ик уралла ҫӑрттансем, ик уралла тискер кайӑксем ман вӑлтана ҫакланаҫҫӗ, хӗвел ҫуттине тухса ӳкеҫҫӗ.

Ак, пӑхӑрха, пӑхӑр. Тытсах пӑхӑр. Есӗр кӑна тилӗ тейӗр. Мӗн пӑшӑлтатса пуплетӗр? Ан хӑра, Павӑл, ҫыннах вӑл. Ун куҫӗсенчен тухать ҫил-тӑвӑл, ҫынна шӑтарсах йараҫҫӗ. Сӑмсисем мӑш мӑш тӑваҫҫӗ Ҫав пулать ӗнтӗ. Шупуҫ ҫынни (Упи вулӑсӗ) Митри Петри, ӗлӗк иквиҫ лапкапа суттӑвакан, чухӑнсен йунне ӗмсе пурӑнакан. Халӗ вӑл копператтив йачӗпеле сутӑ тӑвать, 17 станок чӑпта, вӗт, ҫаптарать. Ҫак кулак патраксен пӗрлешӳне ҫырӑннӑ.

Йулташсем, чухӑнсем! Йытӑпа хӑвалӑр ун пек кашкӑра. Пирӗн уйра ан пултӑр ун пек хыт хура!

Турай вулӑснелле карӗ вӑлта. Мӗнле ҫын ҫакланӗши кунта? Хоп! Ай-ай-ай йавӑр! Йулташсем, пулӑшӑр! Аран-аран кӑлартӑмӑр. Ӗнтӗ пӑхӑр. Ҫак ҫынсем Мӑн-Чураш йалӗсем, ачасем пек вӑрҫӑлла «выҫҫанӑ». 3 ҫынна хӗнеме вунсаккӑрӑн пухӑннӑ. 4 ҫунапа пынӑ. Ҫав ӗҫре йал ҫекретгарӗ те пулнӑ. Ҫапӑҫу Мамай вӑрҫи пекех пысӑк пулнӑ: пӗрпӗрин пуҫӗсене шӑтарса пӗтернӗ, автансем пек хӗпхӗрлӗ йун пулса пӗтнӗ. Мӑн-Чураш паттӑрӗсем, сире вӑлтаран вӗҫертем.

Урӑх ҫапла хӑтлансан, пӗрпӗрине ватса ывӑнсан, кам сире йатламӗ? Совет та питех ырӑламӗ.

Тыт-тыт, вӑлта, тыт вӑлта, иртӗнекенсене тыт, вӑлта. Ак, тата тепри ленккрӗ. Ку кам пулчӗ? Шампа йевӗрлӗ, арӑслан тӗслӗ, ҫын питлӗ?! А а, Саманкка Петӗр Кирилли (Чупай вулӑс, Чатук касси). Ҫакӑ Кирилла иртӗнсе кайнӑ ытла та. Вӑл кашни ҫулта усрав ачисене улӑштарать. Ҫуркуннелле пӗрпӗр тӑлӑх хӗре усрама илет. Ӑна ҫу каҫичен ӗҫлеттерет, кайран хӑваласа йарать кӗркунне. Кӑҫал каллех ун патне Кайри Карӑк йалӗвчи. Алтатти йатлӑ хӗрача, усрав хӗр пулмашкӑн тесе кӗнӗ. Кирилла ҫын тарӗпе пурӑнма вӗренсе ҫитнӗ: кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫленӗшӗн, хӑйсен хӗрӗ тетернӗшӗн, ҫав хӗре вӑл апат ҫитермен ӑш каначен, ҫӑкӑр паман тӑраначен,—выҫӑллӑ-тутӑллӑ усранӑ, час та часах ватнӑ (ех, мур илешшӗ, ҫынсенчен те вӑтанмасть!) Нумайах пулмасть Алтаттийе хӗнесе ҫара уран йур ҫине кӑлара-кӑлара чуптарнӑ, ҫӳҫӗсене ываҫ тулли турта-турта кӑларнӑ.

Йулташсем, ун пек тискер кайӑксем чылай пуҫха йалсенче. Вӗсене, леш, сут айнелле лектересчӗ.

Ну, ытти шыҫмаксем, сире тепӗр хут ҫаклатӑпӑр. Халӗ, тӑвансем, сывӑ йулӑр. Усал йатпа ан асӑнӑр.

Йӑван мучи мыскараҫӑ.

# Йăван пичепе Упрам пиче.

— Мĕнле çĕнĕ хыпарсем пур кунта сирĕн Шупашкарта?

— (Пуçне хыçса). Хыпар, хыпар?.. Нумайах пулмасӑ „Канаш' сойусĕ Чăваш тĕп театтăрĕнче „Хыпар пĕтрĕ—Канаш пулчĕ“ йатлă пйессă лартрĕ.

— „Канаш“ хаçат йупилейĕ кунĕи? Ун çинчен хаçатра хăрах куçпа вулаçа пăхнăчĕ.

— Халăх нумай пулчи?

— Сахалах мар—ал пӳрнисемпе тата ура салтса ура пӳрнисемпе шутласа кăларма пулаӑ.

— Мĕнле апла? Шупашкарти чăвашсем вăл кун пурте шех йĕркипе йалсене кайса пĕтни мĕн?

— Апла мар. Майрисем йаман, тет.

— Майрисем „Канаш“ хаçата йуратмаççĕ пуҫ апла?

— Çапла çав. Учрештенисенче ĕçлекенсен майрисем Мускаври „Ĕçлекенсен сасси“ пекех „Канаша“ йуратмаççĕ. Шупашкарта вырăсла хаçат кăларас пулаӑ, теççĕ.

— Ак, мĕнле иккен. Самана!.. Çпектаккăҫ çинчен каласнăран Чăваш Тĕп театтăрĕнче пайан чăвашла çпектаккăҫ лартаççĕи? Кайса курасчĕ. Арăм: маншăн курса кил, тесе йачĕ те...

— Чăваш театтăрĕнчи артиссем халĕ хĕлĕпех канаççĕ. Чăваш столитсине урăх хулана куçарсан çĕнĕ вăйпа выҫҫама çăмăл пултăр, теççĕ.

—Те-е к—пичĕ кӳпшек... Ăçтаха кунта ĕççĕр аптраннисене ĕç тупса паракан пай?

— Авă—икĕ хутлă мăн çурт. Çурт умĕнче шуса ан ӳк тата. Тата ӳксен, Ĕç пайне кайас вырăнне Сопеса каймалла ан пултăр. Мĕн тума кайас тетĕн ес Ĕç пайне?

— Ĕççĕр аптрарăм та, ĕç тупма пулмĕши, тетĕп.

— А! Ан та кай. Унта сана ак мĕн калĕç; ĕççĕр аптрарăн пулсассăн, ахаҫ ларичен кĕрĕк аркине йăвала, тейĕç. Йалсенче ĕçмен çынна тупма мĕнле хĕн, çавăн пекех халĕ ĕç тупма та хĕн.

— Сан хваттер ăçта? Ху патăнта вырăнаçтаратăн пуҫ мана вăхăтлăха.

— Хваттер? Манăн хăлхам илтеймерĕ пулмалла—хваттер темерĕни çак есĕ?

— Хв ттер, тетĕп çав.

— Ха-ха-ха. Манăн хваттер—Хватей хули хыçĕнче.

— Мĕнле? Тилпĕрен çирĕни мĕн? Мĕн кулмалли пур унтан?

— Ĕлĕк Тиокен йатлă хвилосăв пичке ăшĕнче пурăннă. Епĕ те çавăн пек ăçта кирлĕ унта çывăрса çӳретĕп. Комун пайĕ хваттер тупса парай масӑ. Хваттер çук, ахаҫ çынсем патĕнче хваттĕр шыра, тет. Ахаҫ çынсем хваттерте 30 кун пурăннăшăн 10—15 тенкĕ ыйтаççĕ, çийĕнчен вĕсене вут çурса памалла, ачи пăчине чăпăл туса памалла, майрине... Е, мĕн калаçмалли пур ун çинчен,—калаçса çăвар тутине сайа йани анчах.

— Çăвар тутине тенĕрен, ман çийес килет. Ăçта кунта апат-çимĕç çитерекен çуртсем?

— Уншăн пулсан ĕç тăрас çук. 3—4 та пур. Анчах вĕсенче урă çынна ларма кичемрех. Ак илĕпĕр инвалитсен столовăйне. Унта час та часах çапăçусем пулаççĕ, автансем пекех çапăçаççĕ. Нумай пулмасӑ унта икĕ çын ӳсĕрскерсем тавлашнă, тавлашнă та пĕрпĕрне чышкăсемпе хăналама тапратнă. Аран милитсионерсем пырса чарнă. Инвалит туса йарасран хăрамалла унта.

— Леш, Тишкă патĕнче мĕнле тата?

— Унта ӳсĕр çынсем нумай пулаççĕ. Унта пулакан çынсем тĕлĕнмелле,—ĕçеççĕ-ĕçеççĕ те, хырăмĕсем тулса çитсен, тата ĕçмелĕх хырăмра вырăн пултăр тесе, хăсаççĕ. Хăсса хырăмĕсене пушатсан каллех „литтăрсем“ кӳпме тапратаççĕ.

— Метр çиçтемне вĕренсе çиттеççĕ иккен сирĕн Шупашкарта.

— Çук „литр“ тенине анчах пĕлеççĕ. Ытти метрла виçесене учрештенисенче ĕçлекенсем те вĕренсе çитейменха. Леш „çаҫкăметр“ «килеметр» тенисене, хам ăслă çын пулсан та, вĕренсех çитереймерĕм. Ун пек ăслăхсене вĕренме ман пуç мими çителĕклех мар пуҫ, тетĕп.

— Çапла çав. Çитĕнсе çитнĕ çынна çĕнĕрен вĕрентме йăвăр çав. Ав, епĕ хаçат çинче вуланăчĕ—учрештенисенче ĕçлекен вырăсем чăваш чĕлхине вĕренеççĕ, тенĕчĕ. Халĕ унтан кайран

4—5 уйăх çитрĕ, çапах та пайан пĕр учрештенине пытăм та вырăссем чăвашла пĕр сăмах анчах вĕреннĕ тем. „Пелмес, пелмес", тесе лаҫҫĕ попукайсем пек.

— Тата мĕнле новăçсем пур кунта?

— Кун чухлĕ каланипе çитĕха. Йалта мĕнле хыпарсем пур? Çавна пĕлтерха мана есĕ. Хулапа йалăн çыхăнса ĕçлемелле, теççĕ. Вăл йенчен ĕçсем мĕнле пыраççĕ?

— Мĕнле калас? Хула йал йенвелле туртăннă пек туйăнаҫ те. Учрештенире ĕçлекенсем шех йĕркипе йал йеннелле сулăнаççĕ. 20—30 çухрăмран лав йамалла пулаҫ, çуран те хăйсен укçипе çÿреме йуратмаççĕ. Паллах ĕнтĕ—„вĕреннĕ çынсем".

— Çапла çав. Вĕреннĕ çынсем те хăш чухне айванла ĕçлеççĕ. Авă, Арапуç шкулĕнчи учитлĕ Шур-сухал Таҥукĕ шкулти ачасене метотĕксем, петакокиксем вулама парса пĕтернĕ. Мĕн тума кун пек кĕнекесене илтĕр, сирĕн ваҥҥи çăмăлтарах кĕнекесем çуки? тесе ыйтсан, ачасем çапла калаççĕ: пире учитлĕ ун пек кĕнекесене вăрçавăрçа параҫ, теççĕ.

— Аҫаха, кайăпăр пасар патнелле. Шупашкара килнĕ йачĕпе пасара кайса курас. Ку мĕнле хуçан макаçăнĕ?

— Снапторк теççĕ вăл макаçăна.

— Мĕн пур, мĕн çук вăл макаçăнта?

— Пурте пур, анчах пире хресченсене кирлĕ таварсем пĕр пÿлĕмĕнче анчах йăвашшăн пăхса выртаççĕ. Темĕн тĕрлĕ пренĕксем кăнахвитсем пур, курсан сĕлехесем йухса анаççĕ, илме хаклă.

— Ку картинккăра мĕнле çын пиншакне ÿкернĕ. Ăслă çынăн пиншакне пире ухмахсене кăтартма ÿкерсе панă пуҫ.

— Ăна вывĕскă теççĕ. Çав вывĕска хулари çынсем кураççĕ те, йунĕ тумтирсенех хаклă парса илеççĕ. Йунĕ йапаласене хакла сутса пынă пулин те, Снапторк иртнĕ çулта упыткă курнă, тет.

— Мĕнле вара апла?

— Пĕлейместĕп. Укçа хуҫаççи шăтăкрах пуҫ. Хуҫаççине саплаттарма Шупашкарта çĕвĕçсем сахал, теççĕ.

Ун çумĕнчи мĕнле макаçăн тата? Мĕнле майрасем кĕрсе тухаççĕ унта?

— А, вăл хулари копперативв. Пит йÿнĕ суттăваҫ, çапах та пуйса пыраҫ. Унăн пуçлăхĕ аван тăрăшса ĕçлекен çын..

— Ăна хирĕç мĕнле учрештени суттăваҫ тата?

— Вăл учрештени мар—«Посретник» тенĕ хуçасем. Сутуилÿ тума пултараççĕ, лапкинче ытлашши нумай ҫтавар тытмаççĕ (налокран хăраса), курттăмăн килте суттăваççĕ.

— Чейе иккен вăл хуçасем, тилĕ пекех...

— Ав, унта тата инвалитсен копператтивĕ сутă тăваҫ. Унăн ĕçсĕем пĕр пусăм малалла шусан, икĕ пусăм кайалла чакса пыраççĕ.

— Ха-ха-ха! Рак пек еппин вăл.

— Лере Попйак йатлă хуçа, сăра ĕçсех мăнтăрланса кайнă çын. Услам та нумай илет, Олсойус ресторанне те нумай усă параҫ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен сутуилÿ тума, халăха улталама вĕреннĕ çын.

— Унтан епĕ тапак илемха. Ей, усламçи, тапак парха.

— Мана чĕлĕм хучĕ кирлĕ мар, епĕ чикаркка туртмастăп, чĕлĕмпех паклаттарап. Йурамасҫ, тетĕн? Ме йурамасҫ.

— Ан харкашса тăр, Упрам пиче. Кунти усламçăсем чĕлĕм хутне илмесĕр тапак сутмаççĕ.

— Мĕнле апла?

— Шайттан пĕлет мĕнле! Тапака çирĕп хакпа (6 пуса) сутма хушнă, хăпартса сутакана сута параççĕ, чĕлĕм хучĕ çиве çирĕп хак хурса паман. Çавăнпа тапакран услам нумайах йулмасҫ, тесе хутне хаклăраха сутаççĕ.

— Ак, мĕнле иккен йапаласем. Чичи кăсийа пек чейе усламçăсем. Таптап тапă айне кĕртсе йама пулмĕши вĕсене?

Çакăн хыççăн Упрампа Иван пиче куçран çухалчĕç епĕ пирус илнĕ вăхăтра. Малалла мĕн çинчен каласса вăхăт иртерчĕçши çав çынсем—пĕлеймерĕм.

Иллариус.

# Ҫуссакин йалта йачейккă уҫни.

Куссакин йул. (Шупашкар мешчен ывăлĕ) пайан ирех, пĕлĕт ҫине улăхса аннă пек, вĕҫтерсе ҫурет. Вăл ҫак кунсенче райкомран претписани текенни илнĕ мĕн. Претписанийĕ:

**Тов. Кусакину.**

...Немедленно, во что бы то нистало сорганизовать в деревне Соляновой ячейку РЛКСМ....

За неисполнение сего предписания будет возложено дисциплинарное взыскание.

„Тистсиплинă"... тенинчен сехри хăпнипе Куссакин хăйĕн йулташне чĕнме... сирпĕнсе пырса кĕчĕ.

Претписанине кăтартса питĕ хастарăн:

— Вот райком предлагает во что бы ни стало в Соляновой сорганизовать ячейку, идем организовать,--тесе каласа тăкаҭ.

Пăртак тăрсан: Вот, черт возьми, доклад нужно сделать, не знай как сделаю, тет.

Леш ҫынĕ: вăл хăвăртан килет ĕнтĕ. Есĕ ĕлĕк токлатсем тукаланăи? тесе ыйтаҭ.

Куссакин паттăрланса: я там, в Казани Ветеринарном институте много и хорошо делал доклады. Ну, ничего сделаем и здесь, тесе сăрпаланса тухса кайаҫҫĕ.

**Йалта.**

Хурал пурчĕ. Ҫамрăксем пухăнкаланă, хĕрсем те пĕр уллă ҫиччĕ пынă, анчах тепле чĕнсен те хурал пӳртне кĕме шикленсе тăраҫҫĕ. Хĕрсене чĕнме йалсовет претҫетаттĕлĕ тухаҭ.

— Ну кĕрĕр, мĕн кутăнланса тăраттăр. Ай пуҫҫапмаллаи сире,—тесе кăҫкăраҭ.

Хĕрсем вăтана вăтанах хурал пӳртне кĕрсе пĕр кĕтессе хĕсĕнсе т раҫҫĕ. Куссакин пухăва институтри пекех уҫаҭ. Вара токлат тума тытăнаҭ:

— Товарищи! Мы идем к коммунизму, мы боремся против буржуазии, чтобы уничтожить капитализм. Руководителем этой борьбы является Коммунистическая партия, которая руководит также и нашим Советским правительством. Советское правительство сейчас усиливается: экономическое положение ее постепенно улучшается. Пред нами в настоящее время стоит вопрос смычки города с деревней, а для этого нужно поднять культуру в деревне... ҫакнашкалах малалла та, тулласа кайнă йăр лаша пек, ҫатăлтаттарса кайаҭ.

Ҫамрăксем куҫĕсене чарса пăрахса, хăлхисене йанк тăратса, ҫак тĕрлĕ „вĕреннĕ" ҫын сăмаххисенчен пĕрне те пулса ăнланса йуласчĕ тесе итлесе лараҫҫĕ. Анчах Куссакин хай сăмси вĕҫне тарлаттарсах: капитализм, культура смычка, экономическе положение... „тăнлантараҭ"

Токлатне пĕтерчĕ те, йулашкинчен:

— Вот, для того, чтобы поднять культуру на должную высоту, нужно организовать ячейку РЛКСМ. Прошу высказываться по этому поводу,—терĕ те ларчĕ.

Хурал пӳртĕнче шăп. Никам пĕр сас кăлармаҭ.. Тăрсан тăрсан, йалсовет претҫетаттĕлĕ:

— Да, ячейку РЛКСМ, орканисоваҭ тăвас пулаҭ, вăл питĕ кирлĕ йапала, тесе хучĕ. Кун хыҫҫăн Куссакин:

— Вопрос ясен, ставлю на голосование. Кто за то, чтобы организовать ячейку РЛКСМ прошу поднять руки, тет. Пăхаҭ, алă ҫĕкленисем 5—6 ҫын анчах (кусем шутне Куссакин хăй те кĕрет). Йалсовет претҫетаттĕлĕ ĕҫ тухайманнине курса:—Ну ҫĕклĕр тата аларсене айвансем, тесе кăҫкăрса пăрахаҭ те, лешсем пĕрпĕрин куҫĕсенчен пăхкаласа май пе пурте ҫĕклеҫҫĕ.

Куссакин хĕпĕртенипе сăмсине пĕр иккĕ туртса илет те, протокола—единогласно постановили организовать ячейку РЛКСМ и просить райкомол в дальнейшем почаще присылать докладчиков для поднятия культурного уровня молодежи,—тесе ҫырса хураҭ. Вара:

— Ну теперь записывайтесь в члены РЛКСМ, тет.

Ку сăмахсене каласанах, Куссакин сĕтел айне ӳкнĕ кăранташне илне ҫĕре, хурал пӳртне! Куссакинпа йулташĕ тата йалсовет претҫетаттĕлĕ ҫеҫ тăрса йулаҫҫĕ.

Претҫетаттĕл хыҫалтан: стойте, куда вы бежите, тенине хăлхана чикмесĕр, урасене хыҫала лектерсе ăҫкăнаҫҫĕ килнелле.

Ҫапла Куссакин, «ветеринарнăй инҫтитутра вирлĕ токлатсем тунăскер», сăвара карса итлемелле токлат туса, йалта йачейккă уҫса килет.

Й--й.




Кермани йунне пăркăчпа сăрхăнтарса Хрантси патшалăхӗ пăшал, тупă, пулемет ўстерет.

# Ристансем.

Вӗрентме темиçе хут пухса аптăрарăмăр. Вӗренме пыракансем шăтăксенчен туха туха тараççӗ...

— ?!!

— Унтан испăча пăшал тыттартăм та халăха вӗренме хăваласа, тухма кăларса йатăм.

(Çӗрпӳ уисполкомӗнче Тӗмер вулӗçтăвком претçетатлӗ тунă токлатран).

Хут пӗлменнисене Мирон Иванчă учитлӗ пит тăрăшса вӗрентнӗ. Анчах тем тӗрлӗ тăрăшса вӗрентсен те, кăнтăрла вăхăтне вӗренекенӗсем йӗкехўре пек,—вăш та, вăшт—туса вӗçтерсе тухса кайнă. Учитлӗ тарласа шыва ўксен, вӗренекенӗсем сисмен çӗртенех туха туха тарнă.

Капла ӗç тухман пирки, претçетатӗл хушнипе испач хӗрарăмсене—арçынсене пăшал кучӗпе тӗрткелесе пухнă:

— Ну, ну, аҫа! Хушăнах тăрăшатпăр, вӗт!—тесе çухăрса пыраҫ испачӗ.

Вӗренекенни чăхăмçă лаша пекех турткаланнă.

Кайран пурне те пухсан ватă «ачисем» макăра пуçланă.

— Мирон Мирончă! (хут пӗлменрен мӗн ытас тен есӗ?) хырăм çурăлаҫ кăлар часрах,—тет пӗри.

Тата пăртак тăрсан тепӗр кӗтесрен:

— Ай, ай, ай! Вилеп! ах, ах, ах!—ахлатни илтӗнет.

Хӗрарăмӗсем малтанах аван, шăпăрт ларнă. Учитлӗ мӗн пур вăйпа тăрăшаҫ.

— Марйе! Акă ку мӗнле пуквă пулаҫха. тет „ш" пуквă тытса.

— „Ш" пулаҫ вăл. Учитлӗ „у" тытаҫ те.

— Ку тата?

Алтўçăн ку вăхăта çилли килсе çитет:

— Вăл пӗрле хушсан, ш-у-й-т-а-н ес—пулаҫ тесе кăшкăрса пăрахаҫ.

Ку вăхăта хӗрӗсем те тараха пуçлаççӗ.

— Мана Иван кӗтет!—тет тин кача кайнă хӗр.

— Манăн ăш ыратаҫ—тени илтӗнеҫ.

Аптăранипе учитлӗ чун хавалӗпе:

— Ну! Кайăр еппин пурсăр та, тесе йараҫ!

Пурте сиксе тухаççӗ те, пурте килелле чупаççӗ.

Кашăк.

## Икӗ „Ҫанаш“ ҫелкорӗ хирӗҫ пулчӗҫ.

(Иккӗш те пӗр йалтан).

— Мӗлле ӗҫсем пыраҫҫӗ? тет пӗри.

— Ҫаплах. «Канаш» ваҫҫи ҫырусем пуҫтарапха.

— Апла... а, мӗн ҫинчен хаҫ ҫырса йаранха «Канаша»?

— Мӗн куҫпа хӑлхана лекет, пурне те ҫыратӑп.

— Апла иккен... Итлеха, ача, есӗ ҫырусене йаричен вуласа кӑтартха мана.

— Мӗншӗн?

— Мӗншӗн тесен епӗ те ҫак почтӑпа ҫырусем «Канаша» йаратӑп. Иксӗмӗрӗн те пӗр йапала ҫинчен ан пултӑр, тетӗп.

— Малтан ес кӑтарт, епӗ сана калӑп хӑшӗ йурамасть.

— Ай-ай пить, манне вуласа хӑй ҫавна ҫырса йарӗччӗ... Ес пушар ҫинчен ҫырнӑи?

— Ҫырнӑ.

— Епӗ те. Шкул ҫинчен?

— Ҫырнӑ.

— Копперативтив ҫинчен ҫырнӑи?

— Ҫырнӑ.

— Ӗху! епӗ те ҫырнӑ ӑна!

Ҫелкор ҫавӑрӑнса урӑх ҫулпа уттарать. Пуҫӗнчен шухӑш тухмасть: Мӗн кӑна тата тупса ҫырам?

Сайтсӑв.

## 1924—1925.

Мӗн пулнӑши, йулташсем,
„Ӗҫлекенсен сассине“?
Мӗнле пӑшатан, мӗнле йӗп
Пырса лекнӗ ҫурӑмне?
Мӗншӗн, мӗншӗн, пирӗн „ч“
Кӳрентерет вӗсене?
Мӗншӗн, пирӗн чӑмӑр вӑй
Кӗвӗҫтерет „ҫӑваша“.
«Канаш», «Сунтал» потписчӗкӗ
Кунран куна хӑпарни
«Ӗҫлекенсен Сассин»
Минутпала чакни.
«Канашпала» «Сунталӑн»
Ҫыраканӗ ӳсни,
«Ӗҫлекенсен Сассин»
Пӗрмай «пшиклетни»
Ивановпа Шипкова
Пӑшатанӑн курӑннӑ...

* * *

Ак, «Ӗҫ. Сасси» тытӑнчӗ,
Тӳсеймерӗ малалла
Кӳпӗнчӗ те пулмалла...
Чӑваш ват шӑлӗсене
Ҫӗмӗрет пирӗн „чӑпа“
Ҫухӑртать чӑваша
Шеллемест мӗскӗне!
Тыт! чӑваш, шӑпӑра!
Шӑл, шӑл! ҫак „ч“ на...
Ей тур ҫырлах! Ан пӑрахах!
. . . . . . . . . . .
«Ӗҫлекенсен сасси»
Шевлеленчӗ, пророкланчӗ.
Аминҫ

Кӳсек.

## Пирӗн атте РКП

Кивӗ Вӗренерти пионерсем хӑйсен ашшӗсене: пирӗн атте ес мар, РКП (Раҫҫейри Комуниссен парттийӗ) тесе калаҫҫӗ, тет.

— Ҫӳппи, Ҫӳппи-и, сан Петӳк пионерте тӑрати ҫак?

— Ҫырӑннӑччӗ пулас вӑл, Макҫӑм хӑта.

— Сан Петӳк пионерте пулсан та ман Ваҫук пек путсӗр калаҫмас пуҫха. Еп Ваҫукпа чистиех ӑнтан кайрӑм ӗнтӗ, мана атте тесе те чӗнми пулчӗ, Макҫӑм хӑта, тет.

— Хам ҫуратса устернӗскер, сана хӑта пултӑмиха еп, мошеҫник! Сан аҫу вӗт еп терӗм те, мана хирӗҫ:

— Ман атте ес мар, Ракӑп—тейей се хучӗ вӑл.

— Мӗнле сан шутпа, Ҫӳппи? Нӳшлӗ ман арӑм, хам салтакра чухне, Ракӑп йатлӑскерне тупса йанӑ вара?

Кинемей.

Чӑвашоблит № 952. г. Чебоксары, Гостипография.